26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАРТ 22 ЮНКУН 58(6553) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДУБНО хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра çаплах наступлени туса пынă, Ровно облаçĕнчи район центрне—ЧЕРВОНОАРМЕЙСК (РАДЗИВИЛОВ) хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра —ВЕРБЕНЬ, ОСТРОВ, МЫТНИЦА, КОРОЛУВКА, КОРСУВ, ЛЕШНЮВ, ШНЫРОВ, ТУРЬЯ, БЕРЕЖЦЕ, ЛОСЯТЫН, ЛЕДУХОВ, НОВЫЕ ЗАЛОСЦЫ ятлă пысăк ялсем тата СМЫГА, РАДЗИВИЛОВ ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем мартăн 20-мĕшĕнче, флангсенчен çавăрса илмелли маневр туса тата штурмласа, ВИННИЦА хулине — Украинăн область центрĕпе промышленноçăн пысăк центрне, нимĕçсен хăйсен КАНТАР БУГ хĕрринчи оборонин вăйлă тĕренлетнĕ пунктне туса хуйăсĕрне—туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — Винница облаçĕнчи район центрĕ ЛИТИН хула тата ПОГОРЕЛОЕ, ДЬЯКОВЦЫ, ЛИТИНКА, КУЛЫГА, СОСНЫ, СЕЛИЩЕ, БАЛЬН, ПЕНЬКОВКА, МАЙДАН СУПРУНОВСКИЙ ятлă пысăк ялсем.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, танковăй çарсемпе пехота вирлĕ маневр туса пынипе, ĕнер мартăн 19-мĕшĕнче МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулине — çак пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен ДНЕСТР çинчи паха опорнăй пунктне туртса илнĕ.

Мартăн 20-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах ДНЕСТР шывĕн сылтăм хĕррине тытса илнĕ плацдарма сене асăлатасшăн çапăçнă.

НОВО-УКРАИНКА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. Вăл шутра — ДОЛГАЯ ПРИСТАНЬ, ТОКАРЕВКА, НОВО-ПАВЛОВКА, ОБУХОВКА, СЕРГЕЕВКА ялсем тата ШАЙТОРОВО, ЛЮДМИЛОВКА чугун çул станцийĕсем.

БОБРИНЕЦ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшманпа çапăçса 30 ял ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ОЗЕРНОВКА, ВОРОШИЛОВКА, БОЛЬШАЯ СЕРБУЛОВКА, БОЛЬШОЕ СОЛОНОЕ, ПЕТРОПАВЛОВКА.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсене тĕплĕн-тĕплĕн çапăçнă.

Мартăн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкне сĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Мартăн 20-мĕшĕнче нимĕçсен радиовĕ çапла пĕлтерет: совет самолечĕсем мартăн 19-мĕшĕнче Хельсинки хули çине бомбăсем пăрахнă пулать.

Совет информаци бюровĕ пĕтĕ çирĕплĕн çакна пĕлтерме пултарать: çак пĕлтерĕвĕ суя сăмах пулса тăрать.

* * *

Дубно хулинчен кăнтăр хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. [illegible]

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, Винница хули патне кăнтăр пайне вăрăнса кĕрсе кайнă. [illegible]

Ново-Украинка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн соединенисем тăшманăн хирĕç тăнине сĕнтĕрсе-сĕнтĕрсе, [illegible]

Бобринец хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн соединенисем [illegible]

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен белорус партизанĕсен отрячĕ [illegible]

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. [illegible]

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи ĕçсем пирки пĕлтерни

Мартăн 1-мĕшĕнче СССР Наркоминделĕн Информаци Бюровĕ перемири тумалли совет условийĕсене, Совет Правительстви Финляндие панăскерсене, пичетленĕ кăларнăчĕ.

Мартăн 8-мĕшĕнче Совет Союзĕн Стокгольмри Миссийĕ Финлянди Правительствин ответне илнĕ. [illegible]

Мартăн 10-мĕшĕнче Совет Правительстви Финлянди Правительствине: Совет Правительстви финсен ответне çителĕксĕр тесе шутлать, тесе пĕлтерчĕ. [illegible]

[illegible] советсен перемири тумалли условийĕсене, Паасикиви г-на панăскерсене, [illegible] Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче [illegible] Совет Правительстви Финлянди Правительствин ответне мартăн 18-мĕшĕнче кĕтсе тăрасси çинчен пĕлтерчĕ.

Мартăн 17-мĕшĕнче Финлянди Правительстви советсен заявленийĕ пирки хирĕçле ответ пачĕ, çапла вара вăл [illegible]

СССР НАРКОМИНДЕЛĔН ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн Верховный Совечĕ йышăннă Законсем

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1944 çулхи бюджечĕ çинчен калакан Закон

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă 1944 çулхи бюджетне, Бюджет Комиссийĕн докладчĕ тăрăх йышăннă улшăнусене шута илсе, доходсемпе расходсем енĕпе мĕн пурĕ 163.468,3 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

2. Чăваш АССР бюджетне халăх хуçалăхĕн отраслĕсем тăрăх çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

Доходсем тăрăх:

(пиншер тенкĕпе)

Промышленность	8.800,4
Ялхуçалăхĕ	825,9
Вăрман хуçалăхĕ	4.616,0
Коммунальнăй суртйĕр хуçалăхĕ	4.310,6
Автомобиль транспорчĕ	235,4
Суту-илӳ	3.613,8
Шкулсенче вĕрентнĕшĕн илекен укçа	1.002,3
Вырăнти налоглă мар тĕрлĕ доходсем	4.329,0
Вырăнти налогсемпе тӳлевсем	18.771,2
Государство налогĕсемпе налоглă мар доходсенчен уйăрса пани	94.300,7
Тӳрех вырăнти бюджета кĕрекен госналогсем, тӳлевсем тата пошлинăсем	9.414,0
Хуçалăх органĕсем паракан укçасем	2.825,0
Самообложени укçи	3.143,3
1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне бюджетран юлнă укçа	7.119,7
Районри промышленноçăн дохочĕсем	161,0
Мĕнпур доходсем	163.468,3

Расходсем тăрăх:

(пиншер тенкĕпе)

Промышленность	2.617,0
Ялхуçалăхĕ	3.436,0
Коммунальнăй суртйĕр хуçалăхĕ	4.391,2
Çулйĕр хуçалăхĕ	348,0
Суту-илӳ	481,0
Çыхăну	35,0
Çутĕç	90.649,0
Сывлăха сыхлас ĕç	34.378,9
Физкультурăпа спорт	200,0
Социальнăй обеспечени	2.425,0
Управлени	22.242,2
Ссудăсемпе заемсем тăрăх тӳлени	62,0
Госстрах укçисенчен уйăрса паракан укçаран расходлани	902,0
Ытти расходсем	1.301,0
Мĕнпур расходсем	163.468,3

3. Çак Законăн 1-мĕш статьи тăрăх Чăваш АССР-ĕн республика бюджетне доходсемпе расходсем енĕпе 36.765,3 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

4. Районсемпе хуласен 1944 çулхи бюджечĕсене доходсемпе расходсем енĕпе çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

(пиншер тенкĕпе)

РАЙОНСЕМПЕ ХУЛАСЕМ	Доходсемпе расходсем	Çав шутран: Хăйсен дохочĕсем	Çав шутран: Халăхран пухакан налогсемпе тӳлевсенчен уйăрса пани	Çав шутран: Ытлашши доходсене республика бюджетне пани
1. Шупашкар хули	11.730,3	10.662,5	1.067,8	—
2. Канаш хули	3.026,8	4.173,5	445,7	1.592,4
3. Улатăр хули	6.054,3	5.627,0	484,2	56,9
4. Улатăр районĕ	3.260,[?]	1.539,8	1.721,0	—
5. Элĕк	3.681,7	1.018,4	2.663,3	—
6. Вăрнар	3.923,3	1.943,0	1.980,3	—
7. Йĕпреç	4.131,9	1.864,6	2.267,3	—
8. Ишлей	3.598,5	1.196,2	2.402,3	—
9. Калинино	3.017,0	1.288,5	1.728,5	—
10. Канаш	3.234,8	1.076,5	2.158,3	—
11. Куславкка	4.578,7	1.737,9	2.840,8	—
12. Комсомольски	3.393,8	1.051,8	2.342,0	—
13. Хĕрлĕ Чутай	3.896,0	1.089,8	2.806,2	—
14. Кувакино	2.419,7	660,6	1.759,1	—
15. Красноармейски	3.256,3	1.143,7	2.112,6	—
16. Сĕнтĕрвăрри	3.774,7	1.942,5	1.832,2	—
17. Октябрьски	3.220,8	1.596,0	1.624,8	—
18. Первомайски	3.357,8	1.067,6	2.290,2	—
19. Пăрачкав	3.680,9	1.812,3	1.868,6	—
20. Советски	3.454,1	934,7	2.519,4	—
21. Сĕнтĕр	3.934,7	1.680,5	2.254,2	—
22. Вăрмар	4.621,9	1.311,5	3.310,4	—
23. Çĕрпӳ	6.242,5	2.117,3	4.125,2	—
24. Шупашкар	3.599,9	1.258,8	2.341,1	—
25. Чкаловски	3.653,9	1.325,0	2.328,9	—
26. Шăмăршă	3.092,4	1.001,6	2.090,8	—
27. Шăхасан	3.726,3	1.039,2	2.687,7	—
28. Çĕмĕрле	5.901,0	3.268,1	2.632,9	—
29. Етĕрне	3.977,5	2.117,3	1.860,2	—
30. Елчĕк	4.385,9	1.198,9	3.187,0	—
31. Тăвай	2.874,8	929,5	1.945,3	—
Мĕн пурĕ	126.703,0	60.674,6	67.677,7	—

5. Халăхран пухакан налогсемпе тӳлевсенчен 1944 çулта Чăваш АССР-ĕн республика бюджетне тата районсемпе хуласен бюджечĕсене çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас:

	Ялхуçалăх налогĕнчен	Халăхран пухакан подоходнăй налогран	Военнăй налогран	Халăх хушшинче саракан государство заемĕсенчен
	Процентпа			
Республика бюджечĕ	—	7	4	12
Шупашкар хули	25	3	1	3
Улатăр хули	—	3	1	3
Канаш хули	—	3	1	3
Районсен бюджечĕсем	25	10	5	15

Çав кăтартнă доходсенчен республика бюджетне республикăна пăхăнса тăракан хуласен бюджечĕсене кĕрекен суммăсенчен уйăрса памалла.

6. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечне районсен промышленноçне вăйлатмалли облаçри фондпа 1944 çулта усă курмалли плана пăхса тухма хушас.

7. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне халĕ тунă Чурачăк районĕпе Муркаш районĕн 1944 çулхи бюджечĕсене пăхса тухма хушас.

8. Чăваш АССР-ĕн бюджечĕсене пурнăçлани çинчен калакан çак отчетсене çирĕплетес: 1941 çулта доходсем 147.826,0 пин тенкĕ, расходсем 143.896,0 пин тенкĕ пулнă, доходсем расходсенчен 3.930,0 пин тенкĕ ытларах пулнă; 1942 çулта доходсем 149.725,0 пин тенкĕ, расходсем 141,925,0 пин тенкĕ пулнă, доходсем расходсенчен 7.800,0 пин тенкĕ ытларах пулнă; 1943 çулта доходсем 151.893,6 пин тенкĕ, расходсем 142.201,5 пин тенкĕ пулнă, доходсем расходсенчен 9.692,1 пин тенкĕ ытларах пулнă.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи мартăн 20-мĕшĕ.

Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 14-мĕш статьи çумне хушса çырасси çинчен калакан Закон

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинче Муркаш тата Чурачăк районĕсем тунине тата Чкаловски район центрне Чкаловское ялĕнчен Пăтăръел ялне куçарнине çирĕплетес.

2. Çĕнĕрен икĕ район тунă май Чăваш АССР Конституцийĕн 14-мĕш статьине çапла çырас:

14-мĕш статья. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинче çак районсем кĕреççĕ: **Улатăр, Элĕк, Вăрнар, Йĕпреç, Ишлей, Калинино, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино,** Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Чкаловски, Чурачăк, Шăмăршă, Шăхасан, Çĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсем тата Чăваш АССР государство влаçĕн аслă органĕсене тӳрех пăхăнса тăракан Улатăр, Канаш, Шупашкар хулисем

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи мартăн 20-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ А. С. Зверева Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарне уйăрса лартни çинчен кăларнă Указа çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Анатолий Степанович **Зверев** юлташа Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарне уйăрса лартни çинчен кăларнă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи мартăн 20-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Çак кунсенче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. А. Андреева** юлташ правительство заданине ăнăçлăн пурнăçланăшăн, производствăра хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçленĕшĕн наградăланă Н-ски заводри работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ.

Грамотăсене çаксем илчĕç: цех начальникĕн заместителĕ **Л. П. Андриевский,** слесарь-сборщик **В. М. Андреева,** конструктор бюровĕн начальникĕ **М. К. Ардаматский,** слесарь **И. И. Ершов,** токарь **В. С. Жолобова,** завком председателĕ **Г. А. Петрушев,** директор заместителĕ **П. В. Трофимов** тата ыттисем те, мĕн пурĕ 90 çын.

Завода правительство заданийĕсене пурнăçлас ĕçре активлă пулăшса пынăшăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ **Н. П. Енчиков** тата ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕн промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ **Ф. Л. Мойсин** юлташсем илчĕç.

Хисеплĕ грамота илнисем хăйсен коллективĕ ячĕпе Правительствăна тав тунă, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. А. Андреева** юлташ наградăланисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ ятпа саламларĕ, малашне вĕсене çĕнĕ çитĕнӳсем тума, фронтпа çĕршыв заказĕсене пурнăçлас енĕпе вирлĕн ĕçлеме сунчĕ

Пысăк тупăш илеççĕ

Вăрнар районĕнчи «Волонтер» колхозăн ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп фермисем районра лайăх енĕпе палăрса тăраççĕ. Иртнĕ çулта колхоз çав фермăсенчен 85.342 тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Государствăна кăçалхи çулшăн аш-какай парса татнă, 200 çăмарта панă, сĕт памалли отязательствăна 75 процент пурнăçланă, брынзăна вара килес çулшăн та парса татнă.

Фермăсенчен çакăн пек тупăш илесси ферма работникĕсем тăрăшса ĕçленинчен килет. Фермăсен заведующийĕ коммунистка А. Павлова юлташ ĕçе тĕрĕс ертсе пырать. Ферма работникĕсем тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ. Акă, коммунистка О. Константинова виçĕ çул хушши доярка пулса ĕçлет. Кашни сурăх вăл планран ирттерсе сĕт суса илет. Иртнĕ çулта вăл 9 ĕнерен 11.385 литр сĕт суса илес вырăнне 13.251 литр суса илнĕ.

О. Константинова юлташ çав вăхăтрах колхозри пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Вăл çав ĕçе те тивĕçлипе туса пырать. Комсомолецсем фермăна тăтăшах пулăшса тăраççĕ.

Ефремовăпа Шимягина 17—18 çулхи хĕрсем. Вĕсем хăйсене пăхма панă 27 пăрăва лайăх пăхаççĕ. Вăхăтра тăрантараççĕ, шăвараççĕ, выртса тăмалли вырăнсене яланах таса тытаççĕ. Çавăнпа вĕсем пăхакан пăрусем самăр та таса.

Евдокия Скворцова 7 çул хушши пĕр улшăнмасăр сурăхсен ферминче ĕçлет. Иртнĕ çулта вăл 51 сурăхран 56 путек вырăнне 65 путек илнĕ. 154 сурăхран 223 килограмм вырăнне 237 килограмм çăм илнĕ. Çавăншăн ăна ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе тăрăх 2 тир, 1,5 килограмм çăм панă.

Сыснасен ферминче мĕн пурĕ те 7 ама çеç. 62 çулхи колхозница Федосия Клементьева, тăрăшса ĕçлесе, вĕсенчен çулсеренех 100—115 çăвăртан кая мар илет. Иртнĕ çулта вăл çав амасенчен 115 çăвăр илнĕ.

«Волонтер» колхоз тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармасть. Вăл фермăна татах та лайăхрах ĕçлеттерсе, унтан татах та ытларах тупăш илме тăрăшать. Ута-улăм купта çителĕклĕ, силос тата йывăç тураттисем те чылай хатĕрленĕ. Ферма çумĕнче выльăхсене тĕрлĕ чир-чĕрсенчен сыхлама вĕренмелли кружок ĕçлет.

В. ШАХАЛОВ.

ФЗО шкулĕн ĕçĕсем

Çĕмĕрлери 1-мĕш номер ФЗО шкулĕ вĕренӳ ĕçне нумай лайăхлатрĕ. Кунтан ачасем слесарь, токарь, столяр тата ытти ĕçсем тума та вĕренсе тухаççĕ. Ачасене шкулта вĕренме, ĕçлеме пур условисем те туса панă. Вĕренӳ хыççăн пушă вăхăта ачасем культурăллă ирттереççĕ.

Мастерсем хăйсен мĕнпур пек вăйхалне, пĕлĕвне ачасене вĕрентес ĕçе параççĕ. А. Стопкий, С. Кульцин юлташсем квалификациллĕ рабочисем сахал мар вĕрентсе кăларнă. Шкулта вăрçă ĕçне вĕренмелли занятисем те лайăх иртеççĕ.

ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем пĕр завода фронт заказĕсене пурнăçлас ĕçре тивĕçлĕ пулăшу параççĕ.

Халĕ вĕренекенсем хĕрсех пĕлӳ тĕрĕслевне хатĕрленеççĕ. Кăçалхи май уйăхĕ тĕлне ку смена вĕренĕве вĕçлемелле. Çавăнпа та шкул коллективĕ, юлнă вăхăтпа туллин усă курса, ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕрентессишĕн хĕрӳллĕн ĕçлет.

В. КАСЬЯНОВА.

Щорс çуртĕнчи музее йĕркене кĕртни

Чернигов облаçĕнчи Сновск хулинче чаплă полководец Николай Щорс çуралнă. Унта унăн ячĕпе музей пулнă. Нимĕçсем çав музее йăлтах аркатса пĕтернĕ. Халĕ музее йĕркене кĕртме тытăннă. Музей директорĕ Борматов юлташ (вăл Щорсăн учителĕ пулнă) нимĕçсенчен тăрса юлнă экспонатсемпе кĕнекесене пухса йĕркене кĕртнĕ. Музее йĕркелеме хулари учрежденисемпе çынсем пулăшаççĕ. (ТАСС).

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕ çинчен тата Чăваш АССР-ĕн 1941, 1942, 1943 çулсенчи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх тухса каланисем

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. М. Матвеев юлташ тухса каланă сăмах

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш сессине пăхса тухма Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕ пĕтĕмĕшпех союзлă бюджетпа тата РСФСР бюджечĕпе килĕштерсе тунă, вăл çав бюджетсенчен тухса тăрать.

1943 çулта Чăваш республики промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи тата культура тĕлĕшĕнчи тĕп задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Государство промышленноçĕ (вăрман промышленноçĕсĕр пуçне) плана 101 процент тултарнă, продукци туса кăларассине, 1942 çулхипе танлаштарсан, 13,3 процент чухлĕ ÿстернĕ. Республикăри колхозсем ялхуçалăх çулне организованно вĕçлерĕç; колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен тата колхозниксен хăйсен аллинчи выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ ÿсрĕ. Халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем аманнă тата чирлĕ боецсемпе командирсен сывлăхне юсас, çавăн пекех тата ерекен чирсем саралассинчен сыхланас тĕлĕшпе тăракан хăйсен задачисене çителĕклĕ пурнăçа кĕртрĕç. Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсемпе учительсем пирĕн совет шкулне çирĕплетессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР бюджечĕн никĕсне Чăваш республикин халăх хуçалăхне аталантармалли 1944 çулхи плана хывнă. Çав плана ăна пирĕн халăх хуçалăхĕ 1943 çулта тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе малалла аталантарас ĕмĕтпе тунă. Республикăри халăх хуçалăхĕ малалла аталанса пыни бюджета кăçал 12 миллион тенкĕ чухлĕ ÿстерме май парĕ.

Государствăн вырăнти промышленноçĕ 1944 çулта, 1943 çулхипе танлаштарсан, хăй производствин пысăкĕшне 17,4 процент чухлĕ ÿстерме тивĕç, çакă вăл, 1940 çулхи виçепе танлаштарсан, 141,8 процент ÿсни пулать. Кооперици промышленноçĕ 14,8 процент чухлĕ ÿсет, çакă вăл, 1940 çулхи виçепе танлаштарсан, 115,3 процент ÿсни пулать. Районри промышленность енĕпе уйрăмах пысăк ÿсĕм тума палăртнă.

1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли план тăрăх мĕнпур тĕштырăсемпе техникăллă культурăсен, пахча-çимĕçсен тухăçлăхне ÿстерме, колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçе малалла аталантарма тата колхозниксемпе единоличниксен харпăрхăй хуçалăхĕсенчи выльăх-чĕрлĕхсен йышне чылай ÿстерме палăртнă.

Халăх хуçалăхĕнчен бюджета доходсем парасси вăл — пирĕн республикăри мĕнпур предприятисем хăйсен производство планĕсене уйăхран уйăхах тултарса пымалла тăвассине, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисемпе накоплениcен планне пурнăçа кĕртмелле тăвассине, предприяти руководителĕсен укçа-тенке перекетлессишĕн, финанспа бюджет дисциплинине çирĕп тытса пырассишĕн татăклăн кĕрешме кирлине пĕлтерет. Халăх Комиссарĕсем, ĕççынни депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсен исполкомĕсен председателĕсем предприяти руководителĕсене вĕсен умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте пулăшма тивĕçлĕ.

1943 çулта Чăваш республикинчи вырăнти промышленность плана 116,1 процент, кооперици промышленноçĕ — 107,9 процент, инвалидсен кооперацийĕн артелĕсем — 101,2 процент пурнăçа кĕртнĕ. Государство промышленноçĕ куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси, 1940 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хута яхăн, кооперици промышленноçĕ енĕпе 1/3 хута яхăн ÿснĕ.

1943 çулта Канашпа Шупашкар хулисенчи, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Куславкка, Вăрнар, Шăхасан, Ишлей тата Тăвай районĕсенчи промкомбинатсем чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Шăмăршă, Етĕрне, Пăрачкав, Шупашкар районĕсенчи промкомбинатсем япăх ĕçлерĕç.

1943 çулхи плана техжирпром 63,8 процент, рыбтрест — 37,4 процент, строй материалсем тăвакан промышленноçăн управленийĕ — 89,4 процент кăна тултарнă.

Районри тата кооперици промышленноçĕ 1943 çулта продукци туса кăлармалли плана, тавар хакĕпе илсе шутласан, пĕтĕмĕшпе пурнăçа кĕртрĕ пулсан, унăн плана ассортиментсем енĕпе тултарас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулчĕç. Вырăнти промышленность предприятийĕсем 1943 çулта РСФСР Наркомместпромĕ планпа панă 25 тĕрлĕ япаларан 12 тĕрлĕ япала тĕлĕшпе кăна, промысла кооперици артелĕсем вара 51 тĕрлĕ япаларан 22 тĕрлĕ япала тĕлĕшпе кăна плана тултарнă. Плана вырăнти чĕрт-вăртан туса кăларакан тата ĕç вăйĕ нумай ыйтакан продукци енĕпе уйрăмах сахал тултарнă.

Халăха урана тата çие тăхăнмалли япаласем юсаса парас тĕлĕшпе ĕç питĕ япăх пырать. Панă япаласене вăхăтра юсаса паманнишĕн тата начар юсанишĕн ĕççыннисем тĕрĕс ÿпкелешеççĕ.

Плана тултарманнине пула, уйрăмах ассортиментсем тĕлĕшпе тултарманнине пула, промкооперацин чылай артелĕсем 1943 çулта укçа-тенкĕ тĕлĕшпе пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкрĕç. Промысла кооперици артелĕсем енĕпе дебиторсен парăмĕсем 3.056 пин тенкĕрен 1943 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3.110 пин тенке çитн, кредиторсен парăмĕсем — 9.546 пин тенкĕрен 9.663 пин тенке çитн ÿссе кайрĕç.

Наркомлесăн, стройматериалĕсен управленийĕн уйрăм предприятийĕсенче тата туту-илÿ организацийĕсенче накоплениcем тăвас вырăнне производствăпа çыхăнман расходсем, тăкаксем, растратăсем тăваççĕ, япаласен хăйне ларакан хакне ÿстерсе ярса, штрафсем тÿлесе укçа-тенке усăсăр пĕтереççĕ. Çакă вăл, паллах, бюджетăн доход пайне пурнăçлама чăрмантарать. Çÿлте асăннă наркоматсемпе управленисен тата организацисен руководителĕсем çав çитменлĕхсене шута илме, вĕсене 1944 çулта пĕтерме тивĕçлĕ.

Предприятин экономикипе финанс ĕçĕсене шаларах кĕрсе пăхмалла, бюджет умĕнчи обязательствăсене вăхăтра та пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пымалла, чĕртаварсемпе топливăна перекетлĕн расходласа пымалла, управлени аппарачĕсене май килнĕ таран ытларах пĕчĕклетмелле. Анчах та Наркомлесăн, Наркомместпромăн тата ытти хăшпĕр наркоматсен уйрăм предприятийĕсенче çакă курăнмасть-ха.

Вырăнти тата кооперици промышленноçĕн куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерме пысăк майсем пур. Чăваш республикинчи вырăнти промышленноçпа промсоюзсен предприятийĕсен производствăллă хăватне ÿстермелле, çĕнĕ предприятисем тумалла. Чылай райпромкомбинатсемпе артельсенче нумай япаласене алăпа тăваççĕ, ансат механизмсемпе сахал усă кураççĕ, çынсене ĕçре тĕрĕс вырнаçтарса тухассишĕн тăрăшмаççĕ, çапла вара, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсене сухатаççĕ.

Вырăнти тата кооперици промышленность предприятийĕсен тата Коопинсоюз артелĕсен ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл чĕртавар çитсе пыманни пулса тăрать. Уйрăм артельсем тата Первомайски, Шăмăршă, Пăрачкав, Етĕрне районĕсенчи промкомбинатсем çулталăк тăршшĕпех чĕртавар çитсе пыманнипе аптăранă. Анчах райсовет исполкомĕн председателĕсем вĕсене чĕртавар туртарса килес ĕçре пулăшу паман, çавна пула асăннă районсенчи промкомбинатсем 1943 çулхи плана тултараймаи. Çупа çулĕ пĕтиччен артельсене кирлĕ йывăçа тата топливăна апрельпе май уйăхĕсенче ĕçлемеллĕх турттарса памалла.

Республикăри чи кирлĕ предприятисем валли 1944 çулта 12 пин штук кирпĕч, 5 пин тонна известь, 7—8 пин кубометр чул хатĕрлесе памалла. Çав строительство материалĕсене хатĕрлеме сахал мар топливо кирлĕ пулать. Çавăнпа та ĕнтĕ вырăнти строительство материалĕсем хатĕрлекен предприятисене районри организацисен топливо турттарма транспорт, çавăн пекех ĕç вăйĕ парса пулăшмалла.

Наркомместпромăн, хăйĕн чĕртавар базине тăвас шутпа, апрель уйăхĕнче Çĕмĕрлепе Сĕнтĕрвăрринчи тир-сăран заводĕсене ĕçе ямалла, глазурь тăвассине тата нато-угарнăй производствăна организацилемелле. Союзлă тата республика промышленноçĕн отходĕсемпе анлăн усă курмалла, продукци пахалăхне лайăхлатмалла, таварсем туса кăларнă çĕрте техникăллă условисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине çирĕп контрольлесе тăмалла, кадрсем хатĕрлес, вĕсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе панă плана пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле.

Рабочисемпе служащисен пурнăçне лайăхлатма кашни райпромкомбинатпа артель çумĕнчех подсобнăй хуçалăхсем организацилемелле.

Налогсенчен тата халăхран пухнă укçа-тенкĕрен, колхозсенчен илнĕ подоходнăй налогран тата государство заемĕсене сарнинчен кăçалхи çул бюджета 75 миллион тенкĕ ытла кĕрет. Республикипе пурĕ налогсемпе ытти тÿлевсем тăрăх 400 миллион тенкĕ ытла пухмалла. Ку цифрăсенчен ĕнтĕ çакă курăнать: налогсенчен пухнă укçа-тенкĕ республика бюджетĕнчи доходсен çур пайне яхăн пулать, пĕтĕм тÿлевсем тăрăх пухăнакан укçа-тенкĕ вара республика бюджетĕнчен виçĕ хута яхăн нумайрах пулать. Халăхăн укçи-тенкине мобилизацилемелли плана пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра тултарни бюджетăн доход пайне лайăх пурнăçлама, бюджет тăрăх пăхнă мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре вăхăтра та татти-сыппиcĕр укçа-тенкĕ парса тăма май парать.

1943 çулта укçа-тенкĕ пухмалли плана 40 миллион тенкĕ ытла ирттерсе тултарнă. Кунта çакна палăртмалла: иртнĕ çулăн юлашки икĕ кварталĕнче ĕпир лайăхрах ĕçленĕ пулсан, плана татах та ытларах ирттерсе тултарнă пулăттăмăр. Иртнĕ çулăн пĕррмĕшпе иккĕмĕш кварталĕсенче халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана ирттерсе тултарнă, виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кварталсенче вара ăна тултараймаи. Çакă вăл районсенчи финанспа совет органĕсен ĕçне сÿрĕклетнинчен килчĕ.

Халăхран укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе 1943 çулта Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Тăвай, Шăмăршă, Калинино, Йĕпреç, Етĕрне, районĕсем пачах та çителĕксĕр ĕçлерĕç. Вĕсем государство умĕнче 5 миллион тенкĕ чухлĕ парăма кĕрсе юлчĕç.

Çав районсенчи финанспа совет органĕсем çителĕксĕр ĕçленине Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕнчех кăтартса панăччĕ. Анчах та çав районсен руководителĕсем хăйсен ĕçне критикленинчен тивĕçлĕ выводсем тумарĕç, вĕсем 1944 çулхи пĕррмĕш кварталта та халăхран укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе питĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çав районсен руководителĕсем, халăхран укçа-тенкĕ пухас ĕçе хăйсем ертсе пырас вырăнне, ăна финанс работникĕсем çине тÿнтерне.

Ку çитменлĕхсене пĕтермелле, халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана уйăхран уйăхах, кварталтан кварталах тултарса пымалла.

1944 çулта всеобуч шкулĕнчи, ача çурчĕсемпе яслисенчи ачасен йышĕ чылай ÿсет, больницăсенчи койкăсен хисепĕ те нумайланать. Бюджетпа пăхнă укçа-тенкĕпе тĕрĕс тата вăхăтра усă курнинчен шкулсемпе больницăсен, ача çурчĕсемпе культурăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ лайăхланасси килет. Иртнĕ çулта социаллă-культурăллă мероприятисем валли, уйрăмах халăха çутта кăларас ĕçпе сывлăха сыхлас ĕç валли, уйăрнă укçа-тенкĕпе пĕтĕмĕшпех усă курман. Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров тата Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Лихачев юлташсен 1944 çулта ĕçе çавăн пек хăвармалла мар, Хăйсене панă укça-тенкĕпе вĕсен пĕтĕмĕшпех тата тĕрĕс усă курмалла.

Пурне те кут вĕрентмелли закона чылай районсенче çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ: ачасене пурне те мар шкула явăçтарнă. Уйрăм больницăсенче кирлĕ пек йĕркелĕх çук, больница çурчĕсене юсаман. Чылай районсенче вулав çурчĕсемпе клубсем япăх ĕçлеççĕ. Социальнăй обеспечени енĕпе отечественнăй вăрçă инваличĕсен çурчĕсен ĕçне начар йĕркеленĕ, инвалидсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе сÿрĕкрех ĕçленĕ. Çав çитменлĕхсене 1944 çулта пĕтермелле.

Кăçалхи çул çĕнĕрен апат-çимĕç базисем тăвас тĕлĕшпе ытларах ĕçлес пулать. Кашни больницăн, ача çурчĕн, отечественнăй вăрçă инваличĕсен çурчĕн тата ытти организацисен хăйсен подсобнăй хуçалăхĕсем пулмалла. Çак енĕпе, пуринчен малтан, вырăнти советсен руководителĕсемпе Халăх Комиссарĕсем интересленме тивĕçлĕ. Подсобнăй хуçалăхсене туртăм вăйĕпе вăрлăхсем тата инвентарь тĕлĕшĕнчен пулăшмалла.

Подсобнăй хуçалăхсене организацилесси тата вĕсене çуракине хатĕрлесси паянхи куна республикăра çителĕксĕр пулса пырать. Ку çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле.

Ялхуçалăхĕнче пирĕн умра пысăк задачăсем тăраççĕ.

1943 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата унпа пĕрле укçан иккĕмĕш преми панă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртнă.

Партипе правительство пирĕн ĕçе пысăка хурса хакланине ответлесе, орденлă Чăваш республикин колхозникĕсемпе колхозницисем, ялхуçалăх специалисчĕсемпе тата машинăпа трактор станцийĕсен работникĕсем кăçал колхозри ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк тухăçлă пурнăçласа, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата ытти работниксене ăна большевикла пурнăçа кĕртме мобилизацилесси пулса тăрать.

Ялхуçалăхĕнчи тĕп задача вырăнне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ мĕнпур тĕштырă культурисен тухăçлăхне ÿстерессине палăртса хучĕç. Çав задачăна пурнăçа кĕртес тесен, пуринчен малтан, çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе большевикла ирттермелле, «1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне татăклăн ÿстермелле, машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăхрах усă курмалла, тĕрĕс пусуçаврăнăшсем туса йĕркелемелле, кĕрхи çĕртме тата çаса çĕртме ытларах тумалла, обязательнăй йĕркепе лайăх вăрлăхсем акса, акмалли нормăна çирĕп тытса пымалла, вырăнти удобренисемпе анлăн усă курмалла, акнă тырпулсене çирĕплетнĕ йĕркесем тăрăх пăхса çитĕнтермелле».

Çураки пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Пирĕн республикăри малта пыракан колхозсемпе районсем çуракине лайăх хатĕрленсе çитрĕç, хăйсем валли вăрлăхсем тупса хучĕç, агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртрĕç, инвентарьпе туртăм вăйне хатĕрлесе çитерчĕç.

Анчах та çуракине хатĕрленес ĕçре пирĕн çитменлĕхсем те нумай-ха. Шăмăршă, Чкаловски, Пăрачкав, Кувакино, Çĕмĕрле, Улатăр тата ытти хăшпĕр районсем вăрлăхсем хывса, вĕсене акма хатĕрлесе çитермен, уйрăм МТС-сенче тракторсемпе вĕсем сумне кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене вăрахăн юсаççĕ. Тислĕк турттарас тата ытти тĕрлĕ агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе васкамаççĕ.

Колхоз председателĕсемпе район руководителĕсен çуракине хатĕрленес ĕçре юлса пынине сывăх кунсенчех пĕтермелле, кашни колхозрах планпа акма пăхнă мĕнпур тырпулсен вăрлăхĕсене тупса çитермелле, тракторсемпе вĕсем сумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене, лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене юсаса пĕтермелле, хĕллехи вăхăтра выльăх картисенче пухăннă мĕнпур тислĕке уйхире турттармалла.

Колхозсемпе бригадăсенче çуракине ирттермелли ĕç планĕсене тума тытăнмалла, бригадăсемпе звеносене пухса, йĕркелесе çитермелле, саланса кайнă бригадăсемпе звеносене çĕнĕрен тумалла, вĕсем сумне çĕр участокĕсем, ĕç хатĕрĕсемпе туртăм вăйĕ çирĕплетсе памалла, ку тĕлĕшпе обезличкăна пĕтермелле. Ĕç планĕсене колхозсемпе бригадăсенчи мĕнпур майсемпе, ĕç вăйĕпе тата туртăм вăйĕпе туллин усă курас шутпа тумалла.

Çуракин ăнăçлăхĕ пирĕн условисенче лашасенчен чылай килет. Çураки пуçланиччен виçĕ эрне малтан лашасене мĕнпур ĕçсенчен хăтарса вăйлă апат çине тăратас пулать. Вăйсăр лашасене халех канăç памалла. Лашасен ĕçне çăмăллатас шутпа ĕçре вăкăрсемпе, çавăн пекех тата сĕт сахал паракан ĕнесемпе анлăн усă курмалла.

Кăçалхи çул çуракине ирттерес ĕçре МТС-сен вырăнĕ уйрăмах пысăкланать. Наркомземăн, МТС директорĕсемпе райсовет исполкомĕсен тракторсене тĕплĕн юсаса çитермелле, çителĕклĕ таран горючи турттарса килмелле тата кадрсем лайăх вĕрентсе хатĕрлемелле тăвас пулать. Ялхуçалăхне промышленность паракан пулăшупа анлăн усă курмалла, предприятисенчен МТС-семпе колхозсене квалификациллĕ рабочисен бригадисене ярас ĕçе организацилемелле.

1944 çулта пирĕн вăйлă тухăçлă çĕрулмипе, пахча-çимĕçсем туса илмелле. Чăваш республикинчи колхозсем 1943 çулта тĕштырăсен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе хăйсен задачисене начар мар пурнăçларĕç пулсан, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем тĕлĕшпе вара ĕç урăхларах пулчĕ. Нумай колхозсенче питĕ начар вăрлăхлă çĕрулми лартаççĕ. Уйрăмах ку енĕпе Шăмăршă, Кувакино, Чкаловски тата Пăрачкав районĕсем палăрса тăраççĕ. Вĕсем çĕрулми çулсеренех ытти районсенчен сахалтарах туса илеççĕ.

Практика çакна кăтартса парать: пирĕн республикăра «Лорх» йышши çĕрулми уйрăмах лайăх пулать, унăн тути те лайăх тата вăл сахалтарах пăсăлать. Пирĕн республикăри пур колхозсен те «Лорх» йышши çĕрулми лартма тытăнас пулать. Çавăнпа та ахаль çĕрулмине çав сортлă çĕрулмипе улăштарас ĕçе анлăн организацилемелле. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем туса илес ĕçĕн агротехникине тĕпренех лайăхлатмалла.

Пирĕн ĕçри тепĕр пысăк ыйту вăл — пĕтнĕ сад-пахчисене çĕнĕрен чĕртесси, çырла-çимĕçсен пахчисене анлăлатасси пулса тăрать. Наркомземпа райсовет исполкомĕсен çак ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Иртнĕ кĕркунне колхозсемпе совхозсенче 686 гектар сад-пахчисем, 125 гектар çырла-çимĕç йывăççисем, колхозниксен кил вырăнĕсенче — 50 пин тĕпе яхăн тĕрлĕ çимĕç йывăççисем лартса хăварнă. Государство планĕ тăрăх 1944 çулта улмуççисемпе çырла-çимĕç йывăççисем 100 гектара яхăн лартса хăварма палăртнă. Пирĕн çав плана ирттерсе тултарма, республикăн сад-пахчисем тĕлĕшпе пулнă чапне каялла тавăрма пур майсем те пур.

Кăçалхи çул пирĕн пысăк тухăçлă техникăллă культурăсем (йĕтĕн, кантăр, махорка, кок-сагыз) туса илмелле, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿсем тумалла.

Республикăри нумай районсем лайăх ĕçленипе пĕрлех, пирĕн ялхуçалăх ĕçĕсенче чылай кая юлса пыракан районсем пур. Вĕсем—Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă, Чкаловски районсем. Ку районсене пысăк пулăшу парса пынă: колхозсене пĕчĕклетсе йĕркелетнĕ, МТС-сене пĕчĕклетсе çĕнĕ МТС-сем тунă, вĕсене горючипе сĕрмелли материалсем пĕтĕмĕшпех парса тăрас тĕлĕшпе мерăсем йышăннă, вăрлăхсем кивçен панă. Халĕ ĕнтĕ ĕç çав кая юлакан районсен руководителĕсем хăйсен аллинчи майсемпе мĕн чухлĕ тĕрĕс усă курма пултарнинчен килет. Çуракине ăнăçлăн ирттерес, вăйлă тырпул никĕсне çирĕп хывса хăварас, çапла вара унти япăх ĕçсене тÿрлетес тесен, асăннă районсен çине тăрса ĕçлемелле.

Февралĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 25-мĕшне çитиччен республикăра çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитмелли уйăхлăх пырать. Çак вăхăтра çуракине хатĕрленес ĕç чылай лайăхланчĕ. Колхозсемпе ялсовечĕсен председателĕсем, районсен руководителĕсем уйăхлăха колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухассипе çыхăнтарма тивĕçлĕ. Ку ĕçе колхозсемпе МТС-сем, совхозсем, подсобнăй хуçалăхсем тата районсем социализмлă ăмăртура илнĕ хăйсен обязательствисене тĕрĕслесе тухас, çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес майпа туса ирттермелле.

Партипе правительствăна, хамăрăн аслă çулпуçа Сталин юлташа эпир çапла шантарса калатпăр: Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне панине ответлесе, ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвăпăр, паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшассине татах та ытларах вăйлатăпăр.

1944 çулхи бюджета пурнăçласси — государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Сессире уйрăм наркоматсен, çавăн пекех тата Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕрĕс критиклерĕç. Наркоматсем тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кунта кăтартса панисене шута илĕç, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе практикăллă мерăсем йышăнĕç.

Депутат юлташсем! Аслă Сталин ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар, хамăрăн Тăван çĕршыва ылханлă тăшманран утăм хыççăн утăм тасатса, ăнăçлăн малалла талпăнса пырать. Чăваш халăхĕ, пирĕн аслă Тăван çĕршыври ытти мĕнпур халăхсем пекех, вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе, нимĕç захватчикĕсене хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан таса кĕрешÿре паттăр Хĕрлĕ Çарăн вăйхăватне татах та ытларах тĕреклетсе пырĕ. (Аслă çупаççĕ).

Ыйткетнĕ стенограмма тăрăх пичетленет.

Колхозниксем тата хастарлăнрах ĕçлеме пулаççĕ

ИПЛЕЙ. Чăваш республикипе Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш преми пани çинчен калакан хыпар районри колхозсене хăвăрт сарăлчĕ. Çак кунсенче районри колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртрĕç, вĕсенче пурĕ 5.745 колхозник пулнă.

«Броневик» колхозри митинга пур колхозниксемпе колхозницăсем те пухăннă.

Республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш преми панине пĕлнĕ хыççăн, митингра Матвеев колхозник çапла каларĕ:

—Иртнĕ çул пирĕн колхоз ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те фронт ыйтнă пек организованно туса ирттерчĕ. Тĕштырăсене гектартан 10,5-шар центнер туса илчĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илни пире кăçал тата тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

«Броневик» колхоз членĕсем митинграх çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кăçал гектартан вăтам шутпа 13,5 центнер тулă, 13 центнер сĕлĕ, 14 центнер урпа, 14 центнер пăрçа, 150-шар центнертан кая мар çĕрулми туса илессишĕн тимлĕн кĕрешме пулчĕç.

«МОПР» колхоз членĕсем митингра çуркунне акмалли вăрлăхлăх тырра çак кунсенчех тивĕçлĕ кондицие лартма, çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерме обязательство илчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра колхозниксемпе колхозницăсем пуху хыççăнах çураки валли хăйсен килти запасĕсенчен вăрлăхлăх пăрçа пама тытăнчĕç.

А. ФИЛИППОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ТАСС опроверженийĕ

Швецсен хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Швейцарире тухса тăракан «Журнал де Женев» ятлă хаçат çакăн пек сасçу сарать: Анкарара румынсен представителĕ пе Штирбей князĕ «перемири тăвас пирки англо-саксcем ырланă вырăс условийĕсене» панă пулать. Çав условисенче çичĕ пункт имĕш, вĕсенче Совет Союзĕпе Румыни тăкки çинчен каланă пунктсем пур пулать, Румыни Трансильвани территорине каялла тавăрса парасси çинчен, Совет Союзĕ контрибуци ыйтманни çинчен тата ытти çинчен те каланă пулать.

ТАСС çакăн пек пĕлтерме полномочи илнĕ: çав сасçу вăл пĕтĕмĕшпех тÿртса кăларнă суя хыпар, Штирбейе румынсен урăх представительне совесем нимĕнле условисем те паман.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Гейтер агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 19-мĕшĕнче кăнтăрла «Мародер» йышши самолетсем, истребительсем хÿтĕленипе, Сурçĕр Францири çар объекчĕсене тапăннă.

Мартăн 19-мĕшĕнче каç пулсан Америка авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Па-де-Кале районĕсенчи çар объекчĕсене чылайĕшне тапăннă.

ФРАНКФУРТА ТАТА ФРАНКФУРТ РАЙОННЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акалчансен бомбăсем пăрахакан авиацийĕн самолечĕсем пин вĕçев ытла тунă. Бурисенчен ытларах Франкфурт хулине тапăннă. Хула çинче вăйлă пушар сулăмĕ курăнса тăнă.

Франкфурт хули вăл нимĕçсен химипромышленноçĕпе точнăй машиностроени центрĕ пулса тăрать.

Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем тăшманăн Хĕвеланăç Германири çар объекчĕсене чылайĕшне тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ мартăн 18-мĕшĕнче тунă операцисем вăхăтĕнче нимĕçсен 82 самолетне персе ÿкернĕ.

ВЕНГРИЕ ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ ОККУПАЦИЛЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли телеграф агентстви хăйĕн Бухарестри корреспонденчĕ панă хыпара пĕлтерет. Унта Германи çарĕсем пĕтĕм Венгри территорине оккупацилени çинчен каланă.

АНКАРА, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли телеграф агентстви хăйĕн Бухарестри корреспонденчĕ панă хыпара пĕлтерет. Унта Германи çарĕсем пĕтĕм Венгри территорине оккупацилени çинчен каланă. Германи çарĕсем Венгрие оккупациленĕ вăхăтра Хорти тата Венгрин генеральнăй штабĕн начальникĕ, Гитлер чĕннипе, унăн ставкинче пулнă.

ПЮШЕНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртен çапла пĕлтерет: Алжирти суд Пюшене вĕлермелле тунă хыççăн Пьер Пюше кассаци жалоби панă. Анчах кассаци сучĕ Пюше жалобине килĕшмен. Вара Пюше защитникĕ мартăн 18-мĕшĕнче де-Голль патне Пьер Пюшене вĕлересрен хăтарма ыйтса çырнă. Де-Голль вăл ыйтнипе килĕшмен. Вара паян ирхине Пюше пирки йышăннă приговора пурнăçа кĕртнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ МАНУС УТРАВĔ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем Манус утравĕ çине пырса аннă (ку утрав Адмиралтейство утравĕсенчен чи пысăкки) çарсене утрав çине анма союзниксен флочĕпе авиацийĕ пулăшнă тата унччен йышăннă Хаувейпе Бутьосуо утравĕсем çинчен артиллери персе хÿтĕлесе тăнă. Аннă çарсем хушăнинче сухатусем нумаях пулман.

Тÿрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн мартăн 19-мĕшĕнче тухнă 56-мĕш №-че Совинформбюрон «Кăçалхи мартăн 6-мĕшĕнче 16-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен тÿснĕ сухатусем тата Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем тытса илнĕ трофейĕсем» ятлă пĕлтерĕвĕнче 6-мĕш йĕркере пуçланса кайкан предложение çапла тÿрлетсе вуламалла: «Савăн чухне, Плиев генерал-лейтенантăн гвардейски группи нимĕçсен тылне кĕрсе кайсан, нимĕç командованийĕн хăйĕн çарĕсене тытса пырасси пуçĕпех пĕтсе ларнă та вара вăл хăйĕн салтакĕсене вак-тĕвек ушкăнсемпе пĕчченшерĕн те пулин хĕвеланăçнелле шăвăнса тухма приказ панă».

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00388 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14 400 экз.